***Чăваш митрополийĕн пуçлăхĕ, Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава***

# *РАШТАВ ЯЧĔПЕ ЯНĂ САЛАМЛĂ ÇЫРУ*

*Паянхи кун Христос Вифлеемре Хĕртен çуралнă,*
*паянхи кун вĕçĕмсĕр Турă Этем пулнă:*
*Сăмах Турă ўтленнĕ,*
*Пĕлĕт çинче хăватлă Ангелсем савăннă,*
*çĕр çинче çынсем хĕпĕртенĕ.*
***Уяв юрринчен***

***Хаклăран та хаклă тăванăмсем!***

Акă ĕнтĕ Исаия пророк авалах пĕлтерсе хуни çитрĕ. Вăл çапла каланă: *«Акă Хĕр, йывăр çын пулса, Ывăл Ача çуратĕ, Ăна Еммануил ятлă хурĕç, çак ят «Пирĕнпе Турă» тенине пĕлтерет»*, – тенĕ ***(Мф. 1, 23; Ис. 7, 14)***. Михей пророк малтанах каласа хуни те çитрĕ. Вăл: *«Вифлеем, Иуда çĕрĕ, эсĕ те Иудăн аслă хулисенчен нимĕнрен те кая мар, санран Çулпуç тухĕ, Вăл Ман халăхăма, Израиле, сыхласа усрĕ»*, – тенĕ ***(Мф. 2, 6; Мих. 5, 2)***.

Хаклă тăвансем! Çуралнă Туррăмăра чаплăн, пĕтĕм чунтан савăнса, таса чĕрепе мухтавлăр, «пирĕншĕн çуралнă Ачана, Ĕмĕртен Ĕмĕрхи Турра» хĕрўллĕн тав тăвăр! Пире Турă тивлечĕпе çĕнетмешкĕн, тасатмашкăн, пурнăçăмăр тăршшĕпех ĕмĕрхи Евангели çулĕсемпе çўретмешкĕн Иисус Христос Туррăмăр Хăй килинччĕ те пирĕн ăша вырнаçинччĕ, çапла *«пирĕн ăшра Турă канăçлăхĕ пулинччĕ»* ***(Кол. 3, 15)***.

«Тулли вăхăт» çитнĕ, тĕнчене Çăлакан Иисус Христос Туррăмăр çурални çинчен пĕтĕм тĕнчене пĕлтерсе тўпере Вифлеем çăлтăрĕ çуталса кайнă.

Пĕтĕм тĕнчешĕн сăваплă каç çĕр çине Турă-Ача çурални çинчен Ангелсем мухтавлăн та савăнăçлăн юрласа пĕлтернĕ: *«Мухтав Çўлти Турра, çĕр çине канăçлăх килчĕ, çынсене ырăлăх çитрĕ!»* – тесе юрланă ***(Лк. 2, 13-14)***. Туррăмăр çуралнăшăн чи малтан вĕсем савăннă: Турра мухтанă, этемлĕхе Турă Ывăлĕ çĕр çине канăçлăх тата Турă ырăлăхĕ илсе килни çинчен пĕлтернĕ.

Чăнах та, Христос çурални пĕтĕм этемлĕхе улăштарнă: çылăха путнă этеме Турăпа çураçтарнă, этем чунне, христиансен йышне канăçлăх илсе кĕртнĕ. Христос юратăвĕ пире Çўлти Аттемĕрĕн ачисем турĕ ***(Гал. 2, 4-7)***. Çак юрату пире йывăр вăхăтра лăплантарать, халсăрланнă чухне – тĕрек парать, ĕмĕрхи ырă пурнăça куçнă чухне, Христоспа пĕрлештерсе, савăнăç кўрет.

Çуралнă Çăлаканăмăр пире чăнлăх çутине – унччен хамăр çухатнă çутта – тавăрса парать, пирĕнтен вăрланă тўрĕлĕхе пĕлтерет, пире пăрахса кайнă тăнăçлăха каялла тавăрса парать. Пире вĕрентмешкĕн Турă Ывăлĕ Хăй килет – Ăна Ангелсен шутсăр йышĕ епле пĕр сассăр тăнлать. Çуралнăскерĕ – Турă мухтавĕн çути, Вăл пур тĕлĕшпе те Ашшĕпе пĕрех ***(Евр. 1, 3)***. Тĕнчене Пултараканĕ пĕрремĕш этеме тунă чухне шăпах ĕнтĕ Ăна каланă: *«Хамăр сăнарлă этем тăвар»*, – тенĕ ***(Пулт. 1, 26)***. Çуралнăскерĕ – пуçламăшĕнче, çĕрпе тўпене Тăваканĕ Вăл. Ку – Унăн ĕçĕ ***(Евр. 1, 10)***. Пире Христос аслăлăхĕ ан хăраттăр. Вăл вĕрентме килнĕ, Синай тупăкĕсемпе килмен, йăваш ача пек килнĕ, вĕрентмешкĕн те чаплă та шавлă хулана мар, шăп витене суйласа илнĕ.

Унӑн пӗрремӗш сӑмахӗ сырӑшран илтӗннӗ, Вӑл халсӑрланнӑ этемсене Хӑй мӗнле хӗрхеннине кӑтартнӑ, Унӑн вӗрентӗвӗ куҫҫульрен пуҫланнӑ.

Таса Чиркӳ пире уйрӑмах ҫак сӑваплӑ кунсенче хамӑрӑн Туррӑмӑрпа пӗрле пулма хистет, савӑнӑҫлӑн та чунтан-вартан хисеплесе ҫакна асра тытасчӗ: Туррӑмӑр – пирӗн хушшӑмӑртах, Вӑл – ҫӗр ҫинчех, Вӑл пирӗн хамӑрлӑха Хӑй ҫине илнӗ, *«Вӑл, пуянскер, пире Хӑйӗн ҫуклӑхӗпе пуйтарас тесе сирӗншӗн пуянран ҫука юлнӑ»* ***(2 Кор. 8, 9)***, пирӗнпе Турӑ... Пире Чиркӳ Ӑна тасалнӑ чӗрепе кӗтсе илме чӗнет, Ӑна ирсӗрленмен чӗлхе-ҫӑварпа мухтама, ҫӗр ҫинчи хӗвӗшӳрен, ҫылӑхсенчен тасалса Ун патне чун-чӗрепе ҫӗкленме йыхӑрать.

Хаклӑ тӑвансем! Ҫӗр ҫинчи пурнӑҫра эпир чи кирлӗ чӑнлӑха манӑҫсах тӑратпӑр: хамӑр яланах Турӑ умӗнче ҫӳренине, Ҫӳлхуҫа пирӗнпе иккенне, Вӑл пирӗнпе юнашарах пулнине асра тытаймастпӑр. Ҫакна яланах асра тытнӑ пулсассӑн, эпир ҫапла ҫылӑха юратакансем, хамӑра юратакансем, мӑнкӑмӑллӑ та хирӗҫӳллӗ пулаттӑмӑр-и, яланах ҫылӑх енне сулӑнаттӑмӑр-и? Ҫӑлакан Туррӑмӑр ҫывӑхрах пулнине пӗлсе тӑрсассӑн, Вӑл пирӗн хушшӑмӑртах – Ӑна ӗненекенсем, Ӑна юратакансем хушшинчех – пулнине туйса тӑни пире чӑн-чӑн христианла пурӑнма хистет, пире ҫылӑхпа кӗрешнӗ чухне пысӑк вӑй парса тӑрать. Ҫакна нихӑҫан та – уйрӑмах Христос ҫуралнине уявланӑ кунсенче – асран яма юрамасть. Ҫак сӑваплӑ чӑнлӑх пирӗн чунсен тӗрекӗ пултӑр. Вӑл пирӗн чун-чӗрене ертсе пытӑр. Пирӗн пур ӗҫре те, сӑмахра та, шухӑш-кӑмӑлра та ҫавӑ пултӑр. Хурлӑхлӑ кунсенче пирӗн чун-чӗрене ҫавӑ лӑплантартӑр. Вара пирӗн пурнӑҫ Турӑ паракан тивлетлӗ пулӑшупа ҫуталӗ.

Ҫӗр ҫине Тӑнӑҫлӑх Турри килнӗ сӑваплӑ кунсенче пӗр-пӗринпе килӗштерсе пурӑнӑр, сирӗн хушшӑрта пире Христос халалланӑ тӑнӑҫлӑх пултӑр. Тӑванӑрсемпе, юлташӑрсемпе татуллӑ пулӑр, кил-йышри, ӗҫри тивӗҫсене лайӑх туса пырӑр, хамӑрӑн Чӑн тӗн Чиркӗвӗшӗн тата Тӑван ҫӗршывӑмӑршӑн ырӑ кӑмӑлпа ӗҫлӗр.

Ҫӳлхуҫана кӗлтӑвар, Вӑл тӑнӑҫлӑха хирӗҫ пыракансен, Турра юрӑхсӑр пурӑнакансен чӗрисене ҫутаттӑрччӗ. Иртнӗ ҫул пирӗн Чиркӳшӗн питӗ кӑткӑс пулчӗ. Элладӑри тата Александрийӑри Чӑн тӗн Чиркӗвӗн пуҫлӑхӗсем раскольниксем енне куҫнӑ «Украинӑри чӑн тӗн Чиркӗвне» йышӑннине пула тӗнчере Чӑн тӗн таврари лару-тӑру япӑхланчӗ, Вырӑнти Чӑн тӗн Чиркӗвӗсем хушшинче пысӑк уйрӑмлӑхсем палӑрчӗҫ. Хаклӑ тӑвансем, эпӗ сире Чӑн тӗн пӗрлӗхӗшӗн, хамӑр пуҫлӑхӑмӑршӑн – Мускав тата пӗтӗм Раҫҫей Патриархӗшӗн Кириллшӑн – тата Украинӑри Чӑн тӗн Чиркӗвне тӗрӗс тытса пыракан Киев тата пӗтӗм Украина митрополичӗшӗн Онуфрийшӗн кӗлтума ыйтатӑп.

Турӑ ырӑлӑхӗпе эпӗ иртнӗ ҫул Сӑваплӑ ҫӗр ҫинче пултӑм, унта Турӑ Тупӑкӗ умӗнче, Иерусалимри сӑваплӑ вырӑнсенче тата Вифлеем хулинче хамӑрӑн Чӑваш ҫӗршывӗшӗн тата сирӗншӗн – Турра юратакансемшӗн – кӗлтурӑм.

Паян тулли уяв кӑмӑлӗпе, пӗтӗм чун-чӗререн тав туса хамӑр чӗресене Турӑ-Ачана Христоса парӑпӑр, Ӑна, пире Ҫӑлакана, мухтаса юрлӑпӑр. Вифлеемре ҫуралнӑ Иисус Христос Туррӑмӑр пире Хӑйӗн Ҫӳлти пиллӗхӗпе пиллетӗрччӗ. Ӳтленсе ҫын пулнӑ Христос Ҫӑлаканӑмӑр пире пурсӑмӑра та Турӑ ӑсӗн ҫутипе ҫутӑлтартӑрччӗ, пирӗн ӗненӗве ҫирӗплеттӗрччӗ. Ҫак ӗненӳ пире кирек мӗнле йывӑрлӑхра та вӑй парса тӑтӑрччӗ. Вӑл малашне те пире ҫӗр ҫинчен, ҫак хурлӑх айлӑмӗнчен, Турӑ патне Ҫӳлти Патшалӑха ӗмӗрлӗх савӑнӑҫ патне, Турӑпа пӗрле пурӑнмашкӑн илсе каякан ҫула кӑтартакан ҫӑлтӑр пултӑрччӗ.

*«Сире хамӑрӑн Атте Туррӑмӑрпа Иисус Христос Ҫӳлхуҫамӑртан тивлетпе канӑҫлӑх пултӑр»* ***(Флп. 1, 2)*** Аминь.

Христос ҫуралать, Ӑна мухтӑр!

***Турӑ ырӑлӑхӗпе, Шупашкар тата Чӑваш митрополичӗ, Чӑваш митрополийӗн пуҫлӑхӗ Варнава.***

***Раштав. 2019-2020 ҫ.ҫ. Шупашкар хули***